Çамрăк офицерпа калаçатпăр

«Мирлĕ пурнăçшăн службăра тăратпăр»

Салтак ячĕ ĕмĕртенпех ырă та пархатарлă пулнă. Çĕр-шыва сыхлакана-хўтĕлекене авалтанпах чыслана, унпа мухтаннă. Амăшĕ «Ывăлăм салтак кайрĕ» тенĕ чух унăн хумханăвĕпе пĕрлех ачи çак чыса хисеп пулнишĕн мăн кăмăлланни те куç умне тухать.

... Салтак. Шутланă-и Шетмĕпуç ял тăрăхне кĕрекен Автанкассинче çуралса ўснĕ Юрий Иванович Васильев хăй хĕсметре тăнă чух пурăна киле ывăлĕ те Тăван çĕр-шывăн профессионаллă хўтĕлевçи пуласса. Паллах, хăй ашшĕ пуласси пирки ĕмĕтленнĕ ял арçынни. Нумай ашшĕ пекех ывăлĕ те хăйĕн çулĕпе кайса шофер пуласси те тĕлленнĕ-тăр Юрий Ивановича.

Çемье çавăрнă хыççăн тăватă ывăл çуратсан кашниех салтака юрăхлă пулччăр тесе сахал тăрăшнă-и тата Тамара Германовна. «Тăватă ывăл Васильевсен ятне 4 хут ўстерет», – тесе ўстернĕ амăшĕ пепкисене ырлăх-сывлăх çеç сунса.

Ĕмĕтленни çитрĕ. Ашшĕ-амăшĕн пурнăçа кĕрсе пыракан ĕмĕт-тĕллевĕ пирки уçă калаçура вĕсен виççĕмĕш ывăлĕ – Раççей Федерацийĕн çар офицерĕ Денис Юрьевич Васильев лейтенант – каласа пачĕ:

– Вĕреннипе шутласан 5-мĕш çул Раççей çарĕнче службăра тăратăп. Çĕр-шыва хўтĕлесси çăмăл ĕç мар, анчах питех те ответлă. Хăвăн аллунта мирлĕ пурнăç иккенне шутлатăн та яваплăха çирĕплетсе черетлĕ службăна тухатăн. Шухăшра вара пĕр вĕçĕмех атте-анне, пиччесемпе шăллăмсем, хам çуралса ўснĕ пĕчĕк Тăван çĕр-шыв. Йывăрлăхсем çителĕклех пулин те, хам çак çула суйласа илнишĕн паян пĕртте ўпкелешместĕп, – салтакри пек çирĕп кăмăллă калаçать пĕрремĕш отпуска килнĕ лейтенант.

Денис ачалăхра вăрçă е çар пурнăçĕ çинчен ўкернĕ пĕр кинофильма та курмасăр юлман. Апла пулин те хăй çар çынни пуласси пирки 10-мĕш класра çар комиссариатне медицина комиссине кайиччен те шутламан.

– Çавăн чух çар ĕç комиссариачĕн ĕçченĕсем пирĕнпе çар училищисене вĕренме каясси пирки калаçу ирттерчĕç. Çиччĕ виçсе пăхрăм та – ман валлиех! Мускаври командирсем хатĕрлекен Аслă çар училищине суйласа илтĕм. Медицина тĕрĕслевĕ витĕр иртрĕм, вĕренме кĕмелли экзаменсене тытрăм. Çар училищинчи 4 çул 4 кун пекех иртсе кайрĕ, – кăмăллă калаçать хăйĕн ĕмĕрне çар службипе çыхăнтарнă ентеш.

Взвод командирĕ Денис Васильев паян Атăлпа Урал тăрăхĕнчи çар округĕн Свердловск облаçĕнче вырнаçнă вĕрентў центрĕнче салтаксене БМП механик-водителĕ пулма вĕрентессипе тимлет.

Ачаранах ĕçе юратса ўснĕ пирĕн ентеш – çарта та ыттисемшĕн тĕслĕх. Училищĕре тăрăшса вĕреннĕшĕн ăна «Училищĕре лайăх вĕреннишĕн» медальпе чыслана.

Çемье те çавăрнă ĕнтĕ çамрăк лейтенант. Апла ăнăçу пултăр ăна çемье пурнăçĕнче те, çĕр-шыв хўтĕлевĕнче те.

А. БЕЛОВ.

01 пĕлтерет, асăрхаттарать

Мунчасем нумай çунаççĕ

Çу уйăхĕн 30-мĕшĕ тĕлне район территорийĕнче кăçал 16 пушар алхасрĕ. Ку вăл пĕлтĕрхи çак вăхăтпа танлаштарсан 3 тĕслĕх сахалрах. Асăрхаттаратпăр, кун пек чух сахалрах тени тимлĕхе çухатмалла тенине пĕлтермест.

Урамра çуллахи уйăхсем тăраççĕ пулин те, ăшă вăхăтсем çитрĕç тесе асăрханулăха тата пушар хăрушсăрлăх правилисене çирĕп пăхăнассине никамăн та иккĕмĕш вырăна хăварас марччĕ. Çапла калатпăр-ха та, анчах...

Çу уйăхĕн 25-мĕшĕнче 23 сехет те 27 минутра пирĕн пата Турай ял тăрăхĕнчи Çатракассинче уйрăм çыннăн кил хуçалăхĕнче пушар тухни пирки пĕлтерў çитрĕ. Мунча çунать иккен. Оперативлă йышăнупа пушара сўнтерме çийĕнчех тухнă Суворов яч. хис. хуçалăхăн пушар машини «хĕрлĕ автан» çулне самантрах пўлет. Вĕсем вăхăтра çитни пушара вăй илме паман. Анлă сарăлайман пушарта пĕрлехи вăйпа пурăнмалли çурта, кил хуçалăхри ытти хуралтăсене пĕтĕмĕшле сыхласа хăвартăмăр. Инкек сăлтавне тĕпчени куç умне кил хуçисем яваплăх пирки маннине кăтартса пачĕ. Вĕсем мунча кăмаки вырнаçтарнă чух пушар хăрушсăрлăх правилисене пăхăнманмĕн.

Пушарсем тата мунчасем пирки каласнă чух çакна палăртни вырăнлă пулмалла. Кăçал ку пушар 16-мĕш пулчĕ. Çак хисепрен 7-шĕнче «хĕрлĕ автан» мунчара тухни ял çыннисене мунчасемпе тимлĕрех пулма ыйтать.

Купна пĕрлех типĕ кунсем тăнăран ял çыннисене вăрмана канăва тухсан шăрпăкпа асăрхануллă пулма ыйтас килет. Ахальлĕн типĕ çулçăсем тăрăх вут-кăвар хăвăртах аяккалла сарăлма пултарать.

К. ПОПОВ,
патшалăх пушар надзорĕн районти уйрăмĕн инспекторĕ.

Республика кунне халалласа

«Е. Андреев ташă пуçласа пачĕ»

(Вĕçĕ. Пуçл. 1-мĕш стр.).

Ачалăхпа çамрăклăх çулĕсем Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçи тĕлне лекнĕрен Нина та тутлă пурнăç курайман. Шкулта 4 класс вĕреннĕ хыççăн ашшĕ: «Кил-те ĕçлемелле», – тесе шкула яманни, учительсем хĕр ачана шырама пырсан вăл тăтăшах колхоз фермине тарса пытанни паян çеç кăсăклă. Ун чухне вара Нинăн мĕн чуль куççуль юхнине кам пĕлсе çитерĕ-ши?

Çавăнпа та кинемейĕн ĕç стажĕ Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçи пуçланнипе пĕр вăхăта килсе тухать те. Аслисемпе пĕрле Етĕрнене çити çĕр улми турттарса кайнисем – аслă ĕç çулĕн малтанхи утăмĕсем. Йывăр пулнă, анчах пурте чăтнă та Çурлатри хĕрĕ те ыттисемпе танах тўснĕ, ĕçпе Çĕнтерĕве çывхартнă.

– Лаша хресченĕн тĕп ĕç вăйĕччĕ. Колхозри кĕсресем уйрăм сарайĕнче тăратчĕç те вĕсене юрма мана илсе каятчĕç. Кĕсресемпех уйсене сўрелеме те тухма тиветчĕ. «Кĕсрисем тапранса кайсан эсĕ тар. Вĕсем хăйсемех чарăнаççĕ», – тетчĕ ĕçре ертсе пыракан Маруç аппа. Çапла вара 14 çултах аслисемпе тан ĕçлеме пуçларăм. Юлташсем шкула каятчĕç, эпĕ вара аслисемпе пĕрле Çĕмĕрлене çити вăрман касма çуран тухса утаттăм. Çул çинче вут хурса типшĕнсе çĕр каçаттăмăр, – каласа парать кăçалхи пуш уйăхĕн 7-мĕшĕнче 80 çул тултарнă Нина Димитриевна **(сăн ўкерчĕкре).**

17 çулта хăйне Кирок пиччĕшĕ сурăх фермине ĕçлеме илсе кайни те кинемейĕн асĕнчен каймасть. Äçта унта? Путексемпе пĕрле 120-130 сурăха çитсе каякан ферма тавра кашкăрсем уласах çўретчĕç çав. Йăпăрт пăрăнтăн кăна – пĕр-ик сурăх çук та. «Çатан карта урлă вĕлт! кăна каçатчĕç вĕсем», – аса илет ĕç ветеранĕ.

1950-мĕш çулсем пуçламăшĕнче вак колхозсене пĕрлештерес пĕрремĕш юхăм çитсен Çурлатринчи «Буденный» колхоз та Евтихий Андреев ертсе пыракан «Знамя труда» колхозпа пĕр пулать. Çурлатринчи сурăх ферми вырăнне ĕнесене илсе пыраççĕ те Нина Димитриевнăна унта ĕçлеме чĕнеççĕ.

– П. Онькова ферма заведующийĕ пулма çирĕплетнĕччĕ. Кунти ĕçсене йĕркелесе ярассишĕн вăл ответлăччĕ. Мана ĕçе чĕнчĕ те килĕшрĕм. Ферма çитсен куççуль юхса анчĕ. Ĕнисене çунапа хурса килнĕ те лешсем тăраймаççĕ. Çакна курса ĕçлекеннисем те макăраççĕ. Евтихий Андреевич манран ĕçрен хăранипе хăраманни пирки ыйтса пĕлни паян та асра. «Çынна ĕç хитрелетет», – тесе колхоз председателĕ хыççăн ĕне сарайне кĕрсе кайрăм. Пуçланчĕ вара лачакара тăракан ĕнесене тăратса шăварасси, тасатса сăвасси. Начар ĕнесен ушкăнĕнче 5-ĕн ĕçлеттĕмĕр: йăтатпăр, сăватпăр, выртта-ратпăр. Çырмаран кунне 50 картлам шыв йăтаттăмăр, – каласа парать Нина кинемей кашни ĕç çинче уйрăммăн чарăнса тăрса.

Йывăр пулнă, анчах çу каça пĕр ĕнене те, пăрава та вĕлермен. Пурте вăйланса илнĕ, ура çине тăнă. Çакăншăн дояркăсем те, хуçалăх ертўçи те савăнмасăр тăма пултарайман.

– Кĕркунне Евтихий Андреевич ăнăçлă ĕçленĕшĕн тав тума пычĕ те ура çинче тăракан таса ĕнесене пăхса хĕпĕртенипе ташă пуçласа пачĕ. Эх савăнтăмăр вара! – йăл кулăпа çуталчĕ кинемей пичĕ. – Çапла ĕçлесе кĕçех пĕр ĕнерен 20-22 килограмм сĕт суса республикăра та малтисен ретне тухрăмăр. Çакна курма А. Николаев космонавт килни те паянхи пекех куç умĕнче.

1953 тата 1955 çулсенче выльăхчĕрлĕх отраслĕнчи социализмла ăмăртура çĕнтернĕ Нина Димитриевна Курбатовăна Чăваш Республикин Министрсен Совечĕпе КПСС обкомĕ «Республикăри чи лайăх доярка» ят панă. Ĕç чунлă хĕрарăмăн кăкăрне паян Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçинче çĕнтернĕшĕн юбилей медалĕсем, «Ĕç ветеранĕ» медаль, «Коммунизмла ĕç ударникĕ» паллă илем кўреççĕ. Н. Курбатова ĕçĕпе пурнăçĕ Чăваш автономийĕ 90 çул тултарнă май унăн утăмĕсен пĕр пайĕ пулни пирки иккĕленў çук.

Анатолий БЕЛОВ.
Автор сăн ўкерчĕкĕ.

Килти хушма хуçалăх

Çĕр улмин пысăк тухăç вăрттăнлăхĕ

Çĕр улми тутлăхлă çеç мар, çителĕклĕ сывлăш кĕрекен кăпăшка çĕре юратать. Специалистсем çирĕплетнĕ тăрăх çĕр улмишĕн çĕр сывлама пултарни нўрĕк пуррипе танах.

Çавăнпа та «иккĕмĕш çăкăр» çеçкисем 10-12 сантиметра çитсен вĕсене çине тăрсах купаламалла. Çак ансат тата пурте пурнăçлама пултаракан ĕç çĕр улми тухăçне 25 – 30 процент ўстерет.

Манас çук, вăрăма кайнă шăрăх та типĕ çанталăкра çĕр улми кассисене тарăн кăпкалатни, ретсене купалани вырăнлă ĕç мар, мĕншĕн тесен ахаль те сахал нўрĕк туххăмрах пăсланса пĕтет.

Типĕ кунсенче çĕр улми речĕсем хушшинчи ăшăх кăпкалатусем (5-6 сантиметр) вырăнлă. Çав вăхăтрах çумăр çуса иртсен е шăварса пĕтерсен касăсем хушшине кăпкалатса тăпрана ретсем çумне купаламалла. Çакă хушма çимĕçсем тытăнма пулăшать. Çĕр улмие алăпа шăварнă чух пĕр лейка шыв çĕр улмин 2-3 тĕммине çитет. Ретсем хушшине чĕрессине 20 кун иртсен тепре пурнăçламалла.

Сулхăнра аван ўсеççĕ

Кашни пахчарах хĕвел сахал ўкекен вырăнсем пулаççĕ. Пахчаçăн вара çав лаптăксене те усăсăр выртта-рас килмест. «Ун пек çĕрте чечек калчисем ўстерме пулать-и тата мĕнле чечексем вăл вырăнсене тиркемеççĕ?» – кăсăкланаççĕ ял çыннисем.

Вĕсен ыйтăвĕ çине çапла хурав пур:

– Ун пек вырăнсенче чечексем ўстерни лайăхрах. Сулхăнрах вырăнсене чăтăмлă чечексем вара çаксем: упа сарри, атăш курăкĕ (папоротник), хоста (функия), тутлă чечек (медуница сахарная), ветреница (апрель уйăхĕнче чечеке ларать), виноград çулçиллĕ ветреница (августра çеçке çурать), дицентра (июнь – август), май уйăхĕнче чечеке ларакан писев курăкĕ (купена многоцветная), лантăш, пўрнеске курăкĕ (наперстянка пурпурная), апрельте чечеке ларакан пĕвер курăкĕ (печеночница благородная).

Тĕмпе ўсекенсенчен сулхăнрах вырăнсенче çаксем лайăх çĕтĕнеççĕ: гортензи тата вейгела.

Хĕвел кăштах кăна лекнĕ çĕрте астильба, шăнкăрав курăкĕ, примула, лилейник, чăмăр чечек (купальница) çитĕнтерме пултаратăр.

А. СЕМЕНОВ, агроном.

Сообщение о проведении годового общего собрания акционеров

Совет директоров ОАО «Моргаушский молочный завод» сообщает о проведении общего собрания акционеров 29 июня 2010 года.

Начало собрания - 14.00. Начало регистрации - 13.00.

Место проведения: зал заседания административного здания ОАО «Моргаушский молочный завод». Повестка дня:

1. Избрания членов совета директоров ОАО «Моргаушский молочный завод»;
2. Избрание членов ревизионной комиссии;
3. Утверждение аудитора общества;
4. Утверждение годового отчета, годовой бухгалтерской отчетности, в т.ч. отчетов о прибылях и убытках (счетов прибылей и убытков) общества, а также распределение прибыли, в т.ч. выплата (объявление) дивидендов, и убытков общества по результатам финансового года.

Совет директоров ОАО «Моргаушский молочный завод» ИНФОРМАЦИЯ:

Открытое акционерное общество «Моргаушский молочный завод»

Адрес: 429530, Россия, Чувашская Республика, с.Моргауши, ул. Чапаева, д.65

Тел./факс: 8 (83541) 62-6-41.

Стоимость чистых активов на 31.03.2010 - 4 095 тыс.руб. Размер уставного капитала на 31.03.2010 - 4 376 тыс.руб. Количество акционеров на 29.05.2010-30 человек.

Специализированный регистратор Чебоксарский филиал ООО «Реестр - РН», лицензия № 10-000-1-00330 от 16.12.2004, выданная Федеральной службой по финансовым рынкам. Адрес: 428003, Чувашская Республика, г.Чебоксары, ул. Ярославская, дом №17 тел. : (8352) 42-62-65 , факс: (8352) 42-60-96.

Бухгалтерский баланс (тыс. руб.) за 2009 г.

АКТИВ	На начало отчетного периода	На конец отчетного периода
1 .Внеоборотные активы		
Основные средства	5 662	5 020
Незавершенное строительство	2 383	3 669
Долгосрочные финансовые вложения	40 604	65 111
Прочие внеоборотные активы	...	44
2.Оборотные активы		
Запасы	2 989	2 813
Налог на добавленную стоимость	24	264
Дебиторская задолженность (платежи по которой ожидаются в течение 12 месяцев после отчетной даты)	28949	12 611
Денежные средства	84	636
БАЛАНС	**80 695**	**90 168**
ПАССИВ		
3. Капитал и резервы		
Уставный капитал	4 376	4 376
Добавочный капитал	284	284
Резервный капитал	--	219
Нераспределенная прибыль	4.578	1 672
5. Краткосрочные обязательства		
Займы и кредиты	49 809	60 917
Кредиторская задолженность	20 998	22 050
Доходы будущих периодов	650	650
БАЛАНС	**80 695**	**90 168**

Отчет о прибылях и убытках (тыс. руб.)

Выручка (нетто) от продаж	79 009	108 171
Себестоимость проданных товаров	(64 048)	(88 753)
Прибыль от продаж	2 253	11 551
Прочие доходы	55	2 371
Прочие расходы	(1 440)	(1 191)
Прибыль (убыток) до *и/о*	(2 687)	12 456
Чистая прибыль (убыток) отчетного периода	(2 687)	9315

И.о. генерального директора А.В.Воробьев

Главный бухгалтер А.Г.Васильева

Достоверность Бухгалтерского баланса и Отчета о прибылях и убытках подтверждена аудиторской фирмой «Бизнес аудит» (лицензия № Е 00Г8.8”1 выдана Министерством Финансов РФ (Приказ № 573 от 17 сентября 2007) сроком до 30.09.2010)